Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

2024 çул

Юпа (октябрь), 11

ЭРНЕКУН

39/10729/№

Хакĕ ирĕклĕ

ПУЛĂШУ

## Свидетельствăсем панă

**Округри тăватă çемье «Ял территорийĕсене комплекслă аталантарасси» патшалăх программи тата Чăваш Ен Правительстви пулăшнипе пурăнмалли çурт-йĕр илмелли свидетельство хуçисем пулса тăнă.**

Вĕсем (сулахайран сылтăмалла) пурте агропромышленноç комплексĕнче тата социаллă сферăра ĕçлеççĕ: Тăвайри П.Х.Бухтулов ячĕллĕ вăтам шкул учительници Марина Николаевна Никифорова, округри тĕп библиотека тытăмĕнчи Альбина Валерьевна Андреева методист, Йăнтăрчăри ФАП заведующийĕ Роза Федоровна Михайлова фельдшерица тата «АККОНДСЕТ» ОООри кадрсемпе ĕçлекен Татьяна Анатольевна Алькина специалист. Свидетельствăсене Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов панă, ĕçре тата пурнăçра ăнăçусем, çемьере ырлăх суннă.

**Хамăр инф.**



## Çитес пилĕк çулта тата та илемленĕ

**Юлашки çулсенче Чăваш Ен аталанăвне пысăк тимлĕх уйăрни аванах сисĕнме пуçларĕ. Çĕнĕлĕхсем çĕршыв шайĕнче те, республика шайĕнче те кĕрсех пыраççĕ. Иртнĕ çулсенче хăш-пĕр ял-хула хăйне евĕрлĕ никĕс пункчĕ пуласси пирки пĕрре мар каланăччĕ-ха ĕнтĕ халăха. Халĕ вара Чăваш Енри 17 çакнашкал тĕп ял-хула валли нумай çуллăха тăсăлакан аталану йĕркине çирĕплетĕç. Кун пирки Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев Раççей Правительствин председателĕ Михаил Мишустин иртternĕ «Хутлăх аталанăвĕн стратегийĕ» ятлă ятарлă сессинче каланă.**

Чăваш Енри тĕрлĕ тăрăхри инфратытăма палăртнă вăхăтран та хăвăртрах аталантарассипе çыхăннă ĕçе йĕркелес тесе нумай çĕнĕ инвестици проекчĕ пурнăçа кĕртеççĕ. Пĕлтĕр кăна 172 пин ытла çыншăн тăван кил шутланакан 17 никĕс пункчĕ палăртнă, вăл шута республикăри пысăках мар хуласем тата хăш-пĕр округ центрĕсем кĕнĕ. Тăвай ялĕ те, паллах, пирĕн тăрăхри пĕтĕм çыншăн никĕс пункчĕ шутланать. Çакна та каламалла, вĕсем пурте федераллă перечене кĕнĕ, çавăнпа вĕсене аталантарас ĕçе Чăваш Ен çеç мар, Раççей те хутшăнать.

Олег Николаев палăртнă тăрăх, çак перечене кĕнĕ кашни никĕс пункчĕ валли социаллă пурнăçпа экономикине тата тавралăхне сăнлакан паспортсем йĕркеленĕ. Унсăр пуçне, паллах, нумай вăхăта тăсăлакан социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн планĕсене пăхса хунă. Кунта çĕнĕ объектсем хута ярасси те, пуррине юсаса çĕнетесси те, тĕплĕ улăштарасси те, чаплăрах тăвасси те кĕрешĕ. Чăваш Енре Раççейри стратегие пурнăçа кĕртме пулăшакан ятарлă комплекслă программа ĕçлет. Кашни тăрăх аталанăвĕ республикăна çÿллĕрех шая хăпарма май парĕ.

Халĕ 2025-2030-мĕш çулсем валли асăннă программăна редакцилеççĕ, ăна тĕплĕрех тата тĕрлĕ енлĕрех тăваççĕ. Вăл пĕтĕм отрасле пырса тивĕ, унсăр пуçне никĕс пункчĕсене тата вĕсен çумĕнчи ял пайĕсене социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕпе туллин тивĕçтерессине шута илĕ. Чăваш Енри тĕп тимлĕх, паллă ĕнтĕ, Шупашкар хула агломерацине пулĕ. Ăна аталантарассипе çыхăннă программăна 2035 çулччен йĕркеленĕ.

**Элтияр АЛЕКСАНДРОВ**

ФОРУМ

## Чăваш волонтерĕсем – чи маттуррисем

**Ханты-Мансийскра кĕмĕл волонтерсен Пĕтĕм Раççейри саккăрмĕш форумĕ вĕçленнĕ. Унта çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен 500 волонтер пухăннă. Виçĕ куна пынă, анлă программăллă форума Шупашкартан виçĕ педагог хутшăннă.**

Форумра пĕр-пĕрин опычĕпе паллашнă, ăсталăх сехечĕсене хутшăннă, командăпа ĕçлеме хăнăхнă, Пĕтĕм Раççейри «Хĕрлĕ гвоздика» акцие хутшăнса, регионсем хушшинче чи пысăк кăтартупа палăрнă.

ÇЫХĂНУСЕМ

## Туслăх çирĕпленĕ

**ДНР, ЛНР, Запорожье тата Херсон облаçĕсем Раççейпе пĕрлешнĕ кун тĕлне ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Леонид Черкесов Луганск Халăх Республикинче пулнă.**

Чăваш Ен тата ЛНР парламенчĕсем тачă çыхăну тытса ĕçлесси çинчен калакан килĕшĕве алă пуснă. «Эпир хамăрăн опыта Луганскри ĕçтешсемпе пайлама хатĕр – çакă çĕршывăн пĕрлехи право анлăшне çирĕплетме пулăшĕ»,–тенĕ Леонид Ильич Чăваш Енре саккун кăларас ĕçĕн тухăçлă тытăмне йĕркелнине палăртса. Вăл республика çĕнĕ регионсене малашне те пулăшса пырассине, туслă çыхăнусем икĕ регион халăхĕн интересĕсене усă кÿрессине çирĕплетнĕ.

Килĕшÿре ĕçтешлĕхĕн тĕп çул-йĕрĕсене палăртнă. Çав шутра – саккун кăларас ĕçе лайăхлатасси, парламент ĕç-хĕлĕпе çыхăннă пĕр-пĕрин опычĕпе усă курасси, регионсен йăлисене упраса аталантарасси. Пĕрлехи ĕç тĕрлĕ мелпе пурнăçланĕ – саккунсен мониторингĕнчен пуçласа парламентсен аппарачĕсен ĕçченĕсем пĕр-пĕрин патĕнче стажировкăра пуласси таран.

ПРОМЫШЛЕННОÇ

## Чи лайăх арман

**Мускаври Раççейри çăнăх авăртакан тата кĕрпе предприятийĕсен 16-мĕш съезчĕ иртнĕ.**

«Чăвашçăкăрпродукт» акционер обществин «Шупашкар элеваторĕ» филиалĕ пысăк наградăна тивĕçнĕ. Вăл талăкра 250–500 тонна тырă авăртакан заводсен хушшинче çĕнтернĕ, ăна «Раççейĕн чи лайăх арманĕ» статуэтка панă. Ку наградăна предприяти унччен те – 2007 çултан тытăнса – сакăр хутчен çĕнсе илнĕ. Конкурса Раççей ял хуçалăх министерстви, Раççей çăнăх авăртакан тата кĕрпе предприятийĕсен союзĕ, Пĕтĕм тĕнчери промышленноç академийĕ йĕркелесе иртернĕ. Палăртма кăмăллă: Шупашкар элеваторĕ çăнăхпа Чăваш Енре пурăнакансене çеç мар, Раççейри 17 региона, Узбекистана, Казахстана тата Таджикистана тивĕçтерет.

ПАРЛАМЕНТРА

## Туризма витĕм кÿрсе

**РФ Патшалăх Думи туризмпа çыхăннă саккун проектне йышăннă. Ăна парламентăн туризм енĕпе ĕçлекен комитечĕ пăхса тухса çирĕплетнĕ.**

Саккун проекчĕн авторĕсенчен пĕри – Патшалăх Думин депутачĕ Алла Салаева. Вăл каланă тăрăх, «Раççейри туризм ĕçĕн никĕсĕсем çинчен» саккуна улшăнусем кĕртни отрасльти çитменлĕхсене пĕтерме, хутшăнусене йĕркелеме май парать. «Çĕнĕ документ туризм сферинчи уйрăмлăхсене тишкерме, пулăшу мерисемпе требованисене çирĕплетме, аталану çулне тĕрĕслесе тăма пулăшать»,–тенĕ Алла Леонидовна. Саккун проектĕнче «Туризм индустрийĕ» ăнлава та çĕнетнĕ. Унпа килĕшÿллĕн туриндустри вăл – экономикăн туризм ресурсĕсемпе усă курмалли комплекслă отраслĕ. Унта туризмпа çыхăннă пĕтĕм ĕç (рекламăпа информаци, экскурсипе кану, çул çÿревпе апатлану...) кĕрет.

Алла Салаева каланă тăрăх, хальхи вăхăтра туризм енĕпе ĕçлекен предпринимательсен шучĕ самай пысăкланнă.

## ÇЫРĂНТАРУ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ

**Тăвай тăрăхĕн хаçачĕ, пирĕн юратнă «Ял ĕçченĕ», 1935 çулхи нарăс уйăхĕнче тухма тытăннă та пирĕн округ историне, кун-çулне тĕпĕ-йĕрĕпе палăртса, тĕпчесе пырать. Хамăр тăрăх мĕнпе пурăннине, сывланине, кунти çĕнĕлĕхсене тата кунти тĕп пулăмсене пуринчен малтан пĕлтерсе тăрать паянхи кун та.**

**Нимĕнле хаçат та вулакансăр пулмасть, пирĕн ентешсем вара ку енчен уйрăмах хастар иккенне палăртас килет. Эсир ăсатакан çырусем, сирĕн сĕнÿсемпе канашсем пирĕн юратнă хаçата тата чĕрĕрех, хитререх тата пуянрах тăваççĕ. Хыпар ярсах тăрăр, эпир ялан хапăл. Тăвай тăрăхĕнчи кашни килтех «Ял ĕçченĕ» хаçат пулмаллах, çавăнпа эпир сире çырăнтару малалла пынине аса илтеретпĕр.**

**2025 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн альтернативлă майпа çырăнмалли хак – 360 тенкĕ, почта урлă – 648 тенкĕ те 04 пус.**

ЖИЛЬЕ И ГОРОДСКАЯ СРЕДА
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

# Ырри куçа курăнать

**«Çурт-йĕр тата хула хутлăхĕ» наци проекчĕн тĕп тĕллевĕ – çĕршывра çуллен 120 миллион тăваткал метртан кая мар çурт-йĕр хута ярасси, пилĕк миллион çемьен пурăнмалли условийĕсене лайăхлатасси, территорисене хăтлăлатасси. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, асăннă тата ытти наци проекчĕсем Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин сĕннипе 2019 çултанпа пурнăçланаççĕ.**

Юлашки çулсенче пирĕн республикăра пурăнмалли çурт-йĕр тăвасси ӳсĕмлĕ пулса пырать. Пĕлтĕр, тĕслĕхрен, Чăваш Енре пĕтĕмпе 74,6 миллиард тенкĕлĕх строительство ĕçĕсем пурнăçланă, çакă вăл умĕнхи çулхинчен 17,2 процент нумайрах. 780,7 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çурт-йĕр тунă.

Пирĕн Тăвай округĕнче 2023 çулта пĕтĕмĕшле лаптăкĕпе 4632 тăваткал метр е планпа пăхнин 115,8 процентĕ чухлĕ çурт-йĕр хута янă. Çакă вăл иртнĕ çулхинчен те ытларах. 2024 çулхи пĕрремĕш çур çулта та иртнĕ çулхи çав тапхăртинчен чылай ăнăçлăрах ĕçленĕ, 2728 тăваткал метр çурт-йĕр ĕçе кĕртнĕ.

Чăваш Енре уйрăм çурт-йĕр строительстви лайăх аталанать – çакна 2020–2023 çулсенче хута янă çавнашкал çуртсен лаптăкĕ 1,5 миллион тăваткал метртан иртни те çирĕплетет. Кăçалхи прогнозсем те шанăç кӳреççĕ: сакăр уйăхра 263,6 пин тăваткал метр çурт-йĕр ĕçе кĕртнĕ е иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 4,8 процент нумайрах.

– Пирĕн аталанса пымалла тата малалла каймалла. Çĕршыври кашни регион çынсемшĕн пурăнма хăтлă пултăр. Кашниех хăйĕн тата çемйин пуласлăхне, нумай çуллăх тĕллевĕсене çав тăрăхпа çыхăнтартăр,–тенĕ Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин.

«Çурт-йĕр тата хула хутлăхĕ» наци проекчĕн тĕллевĕсенчен тепри – территорисене хăтлăлатасси, пурăнма илĕртӳллĕ тăвасси. Наци проекчĕ хăйсем пурăнакан вырăнсене хăтлăх кĕртес ĕçе граждансене явăçтарассине те мала хурать. «Çурт-йĕр тата хула хутлăхĕ» наци проекчĕн «Хăтлă хула хутлăхĕшĕн» федераци проекчĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Енре тата пирĕн Тăвай округĕнче те чылай обществăлла вырăна тата картиш территорине тирпей-илем, хăтлăх кĕртнĕ. Кăçал Тăвай ен сăн-сăпачĕ нумай улшăнса çĕнелчĕ. Çакна пирĕн тăрăха килен-каян тӳрех асăрхать: унта çапла тунă, кунта çапла лайăхлатнă тесе пӳрне хуçса шутлама та кирлĕ мар – ырри тӳрех куçа курăнать. Акă сасăлав иртнĕренпе кăçал Тăвайри Ленин проспектĕнчи Ленин палăкĕ таврашĕнчи территорие те хăтлăх кӳнĕ. Тӳрех йышăнăпăр, малтанхи тĕксĕмлĕх хуçаланмасть халĕ кунта, ку чухнехи хăтлăх чуна çупăрлать. Çитес çул тирпей-илем кӳмелли объект та паллă. Хăтлăх кĕртес ĕçсене малалла пурнăçласа 2025 çулта пурнăçа кĕртмелли объекта халăх сасăласа палăртрĕ. Сасăлав апрель вĕçĕччен пынă, икĕ объектшăн сасăланă. Унта хутшăннă 3288 çынран 1706-шĕ Тăвай ялĕнчи кивĕ шкул пахчинчи Зоя Космодемьянская палăкĕ тавра тирпейилем кӳрес ĕçшĕн сасăланă. Çапла майпа вара çитес çул ку вырăна хăтлăх кĕртĕç. Тепĕр объекчĕшĕн – Тăвайри автовокзалтан пуçласа Октябрьская урама çити çуран çӳремелли вырăна лайăхлатса йĕркелессишĕн сахалрах – 1582 çын хутшăннă сасăлава.

Тăвайри автовокзал тенĕрен, халĕ ун таврашĕнче Тăм юханшывĕ çинчи гидротехника сооруженине – кĕпере тĕпрен юсаса лайăхлатас ĕçсем пыраççĕ. 26,5 миллион тенкĕлĕх пурнăçламалла. Ĕçсем ерипенрех пыни сисĕнет пулсан та, строительство малалла вăй илет – çакă шанăç парать.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Тасалăх вăййи

**Чăваш Енре Экологи культурин тата çутçанталăкпа перекетлĕ усă курассин çулталăкĕ пырать. Çавна май, тĕрлĕ тăрăхра тăван тавралăха тасатассипе çыхăннă нумай енлĕ ĕç-пуç йĕркелеççĕ.**

Тăвай çĕрĕ экологи тĕлĕшĕнчен Чăваш Енри чи таса тăрăхсенчен пĕри, çавăнпа та пирĕн патра ку ыйтăва тата та пысăк тимлĕх уйăрнине каламалла. Юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче (ку шăматкун), ав, кашниех «Тасалăх вăййине» хутшăнма пултарĕ.

Çак тĕлĕнмелле ĕç-пуç Тăвай ялĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи касра иртĕ. Акшар карьерĕ патне çутçанталăка юратакан мĕнпур çынна 10 сехет валли пымашкăн йыхравлаççĕ. Анчах та хутшăнас кăмăллисен ак çак каçăпа кĕрсе çырăнмалла: https://clck.ru/3DnRyH.




«Тасалăх вăййи» вăл — ăмăрту. Кунта хутшăнакансем çӳп-çап пуçтарас тата ăна ушкăнласа уйăрас енĕпе тупăшĕç. Çак ĕçе уйăрса панă вăхăтра пурнăçламалла. Мала тухнă виçĕ ушкăна вара чаплă парнесем парса хавхалантарĕç. Ăмăрту вĕçленсен вара пурте кар тăрса пикника кайĕç, тăван тавралăх илемĕпе киленĕç. Анчах унта та тупăшу пуласси паллă. Ăмăртура шыраса тупнă чи кăсăклă япаласен конкурсне тата ăста курма май килĕ-ха?

«Тасалăх вăййи» — уяв. Кунта тăван тăрăха илем кӳнисĕр пуçне пĕр шухăшлă çынсемпе вăхăт ирттерме те май пулĕ.

Кирек мĕнле ӳсĕмри çын та хутшăнайрать. 14 çултан кĕçĕнрех ачасемпе пĕрле ашшĕн е амăшĕн пымалла. 14-18 çултисен вара ашшĕамăшĕнчен хутшăнма ирĕк илмелле. Пурне те уява йыхравлатпăр!

**Элтияр АЛЕКСАНДРОВ**

# Пире те манса каймаççĕ

**Сумлă ватăсен кунĕнче Тăвайри райпо системинче ĕçленĕ ветерансене чысларĕç. Чăнах та, пире сума суни савăнтарать, татах та пурăнма вăй-хал хушать.**



Тăвайри культура çуртĕн ĕçченĕсем те чуна тивмелле, кăмăллă юрăсемпе кĕтсе илчĕç. Хăйсен пултарулăхĕпе килентерчĕç. Эпĕ хампа пĕрле Енĕш Нăрваш ялĕнче сутуçăра ĕçленĕ Зоя Васильевна Алешкинана çак уявра курма питĕ хавас пултăм.

Суту-илӳре чылай хушă вăй хунăран, çак организаци ĕçĕ-хĕлĕпе яланах интересленсе тăратăп. «Тăвайри кооператив» аталансах пытăр, пысăк çитĕнӳсемпе малаллах утăмламалла пултăр!

Тавах пире уяв туса панăшăн!

**Надежда ЧЕРНОВА,**
**ĕç ветеранĕ. Енĕш Нăрваш ялĕ**

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

• Çак уйăхăн иккĕмĕш вырсарникунĕ – октябрĕн 13-мĕшĕ – ял хуçалăх тата тирпейлекен промышленноç ĕçченĕн кунĕ. Чăваш Енре кăçал пĕтĕмпе 774 пин тонна тырă пухса кĕртнĕ, кашни гектар вăтамран 28,1 центнер тухăç панă. Тăвай округĕпе пурĕ 28866 тонна пухса илнĕ, кашни гектарăн вăтам тухăçĕ 27 центнерпа танлашнă.

• Техникăна çĕнетмелли программăпа килĕшӳллĕн республикăри аграрисем 2020 çултанпа пурĕ 4 пин ытла единица техника туяннă. Çак шута пирĕн округри хуçалăхсем илнисем те кĕреççĕ.

• Министрсен Кабинечĕ республикăн 2030 çулччен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн комплекслă программине хатĕрлесе çитересси вĕçлесе пырать. Çакăн пирки Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев пĕлтернĕ.

Халĕ ĕçлекен комплекслă программăпа килĕшӳллĕн республика курăмлă кăтартусем тунине палăртнă: регионăн пĕтĕмĕшле продукчĕ, вăтам ĕç укçи, налуксен калăпăшĕ ӳснĕ. Регион аталанăвне пĕтĕмпе 260 миллиард тенкĕ ытла хывнă.

• Регионăн çул-йĕр фончĕ кăçал 8,3 миллиард тенкĕ патнелле. Танлаштарма: 2020 çулта вăл 4,8 миллиард тенкĕ пулнă. Ку укçа-тенкĕпе тĕрлĕ шайри çулсене – республика пĕлтерĕшлисене, вырăнтисене, ялтисене – тума усă кураççĕ. Пуçару бюджечĕн проекчĕсемпе ялсенче çул тума, юсама уйăраканни кăна – 500 миллион тенкĕ патнелле.

• Республикăри мĕнпур ача садĕнче тăван чăваш чĕлхине вĕренмелли пособисем ĕçе кĕртеççĕ. Кăçалхи ноябрьте садиксенче иллюстрациленĕ «500 сăмах/500 слов» словарьпе тата Чăваш Енре пурăнакан халăхсен культурин тĕнчипе паллаштаракан кĕнеке-çулçӳрев тăрăх занятисем пуçланĕç.

«Ачасем те, аслисем те чĕлхене ăнланма, унпа калаçма пултарччăр»,–тенĕ ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев.

• Тăвай муниципалитет округĕнче хăйсен бизнесне пуçласа йĕркелекен вак предпринимательлĕх субъекчĕсене пулăшу памашкăн бизнес-плансене конкурслă майпа суйласа илекен комиссии ларăвĕ иртнĕ, унăн итогĕсемпе 100 пинлĕх гранта Олеся Николаевна Семенова индивидуальнăй предпринимателе пама йышăннă. Конкурс çĕнтерӳçипе килĕшӳ тăваççĕ, вăл хăйĕн ĕçĕн кăтартăвĕсем тата грант укçипе мĕнле усă курни çинчен отчет парса тăрĕ.

• Раççей Экономика аталанăвĕн министерстви 2027 çулччен регионсене килекен туристсен хисепĕ çуллен 5–8 процент ӳсесси çинчен пĕлтерет.

Чăваш Республики 2030 çул тĕлне региона килекен туристсен йышне 1,5 миллион çынна çитерме палăртать. Республикăра вĕсене пурăнмалли номерсен фончĕ ӳсет. Канаш, Улатăр, Шупашкар, Красноармейски, Куславкка округĕсенче тата Атăл леш енче глемпингсем тăваççĕ.

**Иван ГЛАДКОВ**
**хатĕрленĕ**

# Тавтапуç учительсем, сире

**Çак кунсем тĕнчери пĕтĕм вĕрентекеншĕн чи кĕтнĕ тапхăр пулчĕç пулĕ, мĕншĕн тесен вĕсенчен кашнинех ăшă сăмахпа, юратупа тата ытти ырлăхпа вĕренекенĕсем савăнтарчĕç. Анчах та çак вăхăт ĕçре палăрнисене чысламалли чи меллĕ самант та вĕт. Тăвай тăрăхĕнче те çак кунсенче шкулччензи вĕрентӳ тытăмĕнче вăй хуракансен тата Вĕрентекенсен кунне халалласа савăнăçлă уяв иртрĕ.**

Тăвай тăрăхĕнчи воспитательсемпе учительсем Тăвайри Совет Союзĕн Геройĕ П. Х. Бухтулов ячĕпе хисепленекен пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкула пуханнă. Вĕсене саламлама муниципалитет округ ертӳçи Олег Ломоносов, вĕрентӳ пайĕн ертӳçи Ирина Семенова, Тăвай тăрăхĕнчи вĕрентӳпе ăслăлăх тытăмĕнчи ĕçченсен професси пĕрлешĕвĕн ертӳçи Валентина Белова, педагогика ĕçĕн ветеранĕ, Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Владимир Шакров тата ытти сумлă хăнасем килсе çитнĕ. Вĕсем вĕрентекен ĕçĕн пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк тата сумлă пулнине палăртнă, пурне те çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, çитĕнӳсем тата ӳсĕмсем, пултарулла вĕренекенсем суннă.



Çак чаплă уявра ĕçре палăрнисене те чысланă. Чылай педагога Тăвай тăрăхĕн администраци, вĕрентӳ пайĕн тата профсоюзăн наградисемпе хавхалантарнă. Хăшне-пĕрне вара вĕрентӳ ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Раççей Федерацийĕн Çутĕç министерствин Хисеп грамотипе чыс тунă. Вĕсене ятран асăнсан та вырăнлă. Хисеп хучĕпе Тăрмăшри ача сачĕн ертӳçине Надежда Ершована тата Çĕнĕ Пуянкассинчи вăтам шкулăн физкультура вĕрентекенне Павел Романова наградăланă. Тăвай шкулĕнче акăлчан чĕлхи вĕрентекен Наталия Ефремована вара Чăваш Республикин Вĕрентӳ министерствин Хисеп хучĕпе чысланă.

Çак уяври культура программи те питĕ лайăх пулнине каламалла. Тăвай шкулĕнче, «Асамат кĕперĕ» ача садĕнче тата Тăвайри ача-пăча ӳнер шкулĕнче вĕренекенсем, вĕсенче вăй хуракан вĕрентекенсемпе воспитательсем пултарулăх номерĕсемпе пуханнисене пурне те савăнтарнă.

**Алексей АЛЕКСАНДРОВ**

## ПРЕСС-ЦЕНТР ПĔЛТЕРЕТ

**Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне Тăвай округĕпе кĕрхи ĕçсенчен нумайăшне вĕçленĕ. Вырăх-чĕрлĕхе хĕл ăнăçлă каçарас тĕллевпе кашни условнăй вылăх пуçне 29,4 центнер утă-улăмпа сĕтеклĕ апатсем хатĕрлесе хунă. Уйрăммăн илсен, утă 8190 тонна (планăн 119,2 процентĕ чухлĕ), сенаж 22700 тонна (108 процент), силос 27588 тонна (147,1 процент) хатĕрленĕ.**

**Хĕвелçаврăнăша вăрлăхлăх 337 гектар çинчен вырса пухнă, пĕтĕмпе 913 тонна е кашни гектартан вăтамран 27,1 центнер çапса илнĕ. Ку ĕç малалла пырать.**

**Кукурузăна ку вăхăтра юлашки гектарсем çинчен вырса илеççĕ.**

**Çитес çулхи тухăç валли 1459 гектар кĕрхи тулă тата 296 гектар кĕрхи ыраш е пĕтĕмпе 1755 гектар (76,6 процент чухлĕ) кĕрхи тĕш тырă культурисем акса хăварнă.**

**Округĕпе 3750 гектар сĕртме сухи тунă. «Акконд-агро фирма» акционерлă общество ку енĕпе уйрăмах тăрăшса ĕçлет, вăл хăй кăна 1360 гектар çĕре сухаланă е кăпкалатса хатĕрленĕ.**

## НАЛУК

# Раштавăн 2-мĕшĕччен тӳлемелле

**«Уйрăм çынсем 2023 çулшăн налук тӳлемелли уведомленисене ярса парасси малалла пырать»,– пĕлтерчĕç Федерацин налук службин республикăри управленийĕнчен.**

Кăçал пĕтĕмпе 512 пине яхăн налук уведомленийĕ ярса пама палăртнă. Вĕсенчен 300 пинĕшне – Раççей ФНСĕн сайтĕнчи уйрăм кабинетсем, Патшалăх тата муниципалитетсен пулăшу ĕçĕсен порталĕ урлă.

Уведомленисене транспорт хатĕрĕсен, çĕр лаптăкĕсен, капиталлă строительство объекчĕсен хуçисене ярса параççĕ. Унсăр пуçне çак документсенче налук агенчĕ тытса юлман, çын вылăся илнĕ, астармăш вăййисене хутшăнса тунă тупăшран, çавăн пекех налук никĕсĕн пĕтĕмĕшле виçи 5 миллион тенкĕрен пысăкрах тупăшсенчен илекен налуксене шутласа палăртнă кăтартусем пулаççĕ.

Налук виçисем, çăмăллăхсем çинчен налук службин сайтĕнче (www.nalog.gov.ru) вуласа пĕлме пулать. Сайта «2024 çулхи налук уведомленийĕ» промостраница та вырнаçтарнă.

Аса илтерни вырăнлă: пурлăх налукĕсене 2024 çулхи раштавăн 2-мĕшĕнчен кая юлмасăр тӳлемелле.

Налук службин «Налук тӳлекенĕн уйрăм кабинечĕ», «Налуксемпе пошлинăсене тӳлесси» сервисĕсемпе усă курса, Патшалăх пулăшу ĕçĕсен порталĕнче, банксенче тата почта уйрăмĕсенче тӳлеме пулать.

## ПУЛĂШУ

# Пĕтĕмпех çĕнтерӳшĕн

**Тунтикун фурăсене тиенĕ гуманитари пулăшăвне тата пирĕн салтаксемпе офицерсене СВОра тăшманпа çапăçма кирлĕ груза Запорожье облаçĕнчи чăваш полкĕпе Донецк Республикинчи Бердянск районне ăсатнă.**

– Эпир паян СВОна хутшăнакан ентешĕмĕрсене пулăшас, çĕнтерĕве çывхартас тĕллевпе пухнă груз тиенĕ машинăсене ăсатма вăтăр тăваттăмĕш хут пухăнтăмăр,–тенĕ ЧР Пуçлăхĕ Олег Николаев. – Ку ĕçе иртнĕ çулсенче çине тăрсах турăмăр, халĕ те пурнăçлатпăр, ӳлĕм те тăвăпăр. Чи кирли – Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен умĕнче хамăр тивĕçе пурнăçлани. Муниципалитетсем çавăн чухлĕ тавар пухни те эпир йывăр чухне пĕрле пулнине кăтартать.

Квадроциклсем, мотоциклсем, квадрокоптерсем, тепловизорсем, экскаватор, ĕçмелли шыв, строй-материал тата ытти груз ăсатнă. Ку ĕçе нумай предприяти-организаци тата уйрăм çынсем хутшăннă.

## КОНКУРС

# Чăваш пики – «Раççей мисĕ»



**Кăçал çĕршыври чи хӳхĕм пикене юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче палăртнă. Çак ята Шупашкар хĕрĕ Валентина Алексеева çĕнсе илнĕ.**

Вăл Н.И.Пирогов ячĕллĕ Раççей наци тĕпчев медицина университечĕн 1-мĕш курс студентки. Валентина Шупашкарти 5-мĕш гимназирен ылтăн медальпе вĕренсе тухнă. Ӳт-пӳ илемне upрама тата сывлăха çирĕплетме спортзала çӳрет. Çавăн пекех тутлă апат пĕçерме юратать. Фитнес, йога тата ташă – Валентина Алексееван чун киленĕçĕ. Унсăр пуçне вăл макияж ăсталăхне вĕренет тата реклама фотосессийĕсене хутшăнать.

## КУЛЬТУРА

# Поэта чысласа



**Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа чӳк уйăхĕнче 125 çул çитет. Çавна май республикăра уяв мероприятийĕсем иртеççĕ.**

**Тĕп мероприятисем юпа тата чӳк уйăхĕсенче пулĕç. Нарăс-авăн уйăхĕсенче, сăмахран, регионсен хушшинчи «Çеçпĕл поэзийĕ» конкурс ирттернĕ, çавăн пекех «Çĕн Кун Ачи» спектакль премьери, республика шайĕнчи «Культурăсен мозаики» конкурс тата ытти мероприяти пулнă.**

Юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнче вара Мускавра Литераторсен тĕп çуртĕнче Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 125 çул çитнине халалланă литературăпа ӳнер каçĕ иртнĕ. Чӳк уйăхĕнче Канаш тăрăхĕнче «Çеçпĕл чĕнĕвĕ» фестиваль пулĕ. Шупашкарта иртекен Пĕтĕм Раççейри наукăпа практика конференцине кăçал Çеçпĕл Мишшине халаллама палăртнă.

## ЭКОЛОГИ

# Экомаршрут йĕркеленĕ

**Вăрнар вăрманлăхĕнче «Вăрман историне çул çӳрени» экомаршрут йĕркеленĕ.**

Пĕрремĕш экосул Экологи культурин, çут çанталăкпа перекетлĕ усă курассин çулталăкĕнче хута кайни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Экоçул – 1,3 км вăрăмăш. Маршрута çичĕ чарăну кĕрет: «Çĕр çулти хырсем», «Хыр çăпанĕ», «Вырăнти юмансенчен чи асли», «Вăрнар юхан шывĕ», «Лантăш уçланки», «Тар склачĕ», «Кăткă тĕмескисем».

## ДЕМОГРАФИ

# Савăнăçлă лару-тăрура ят хунă

**Округ администрацийĕн ЗАГС пайĕнче тин çуралнă ачасене ят хунă. Икĕ пĕчĕкскер, ашшĕ-амăшĕ вĕсене иккĕшне те Ярослав ят хунă, пурнăçра пуçласа пĕрремĕш документ илнĕ вĕсем. Тăвайри Яковлевсен çемйинче иккĕмĕш ача кун çути курнă, Тăрмăшри Кадикинсем тăваттăмĕш хут ашшĕ-амăшĕ пулса тăнă.**

Савăнăçлă кĕвĕ янăранă май, ашшĕ-амăшĕ ачисем çурални çинчен калакан актсем çине алă пуснă. Çапла вара тин çуралнă ачасем тулли правалла Раççей гражданĕсем пулса тăнă.

Пĕрремĕш тĕп документа – çурални çинчен ĕнентерекен свидетельствăна Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов панă, вăл ашшĕ-амăшне çак чаплă пулăмпа саламланă, ырă суннă. Е.Н.Иванова ертсе пыракан «Веселые нотки» хор ансамблĕ музыка номерĕсемпе савăнтарнă.

ЗАГС пайĕн начальникĕ В.М.Новикова ашшĕ тата амăшĕ пуласси çын пурнăçĕнче чи пысăк телей тата чун кĕтни пулнине, ăна пĕрлехи пурнăçра юратупа тата тимлĕхпе тӳрре кăлармаллине палăртнă.

## МАНĂН ÇЕМЬЕ – МАНĂН ПУЯНЛĂХ

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçланать

# Амăшĕ тата ачисем

**Тăван кил, çемье, тăван кĕтес, Тăван çĕршыв... Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, пĕри теприне тĕревлесе тăраççĕ, пĕр-пĕрне шанăç, юрату, пурнăç, телей кӳреççĕ. Çаканшăн, мирлĕ те тăнăç пурнăçшăн, Тăван çĕршывшăн çапăçман-и, юн тăкман-и вара пирĕн атте-анне иртнĕ вăрçăра? Мускав патĕнчи хаяр çапăçусенче, унтан Ленинградри блокадăра кĕрешнĕ, сăмахран, манăн атте те. Аманнă, ĕмĕрлĕхе сылтăм алăсăр юлнă, анчах тăшман умĕнче пуç усман. Çавăнпах патшалăх наградисене тивĕçнĕ. Вăрçă хыççăн çемье çавăрнă, пире, ачисене, çуратнă, хăйсен ăшшине парса ӳстернĕ. Пинпин çемье çавăн пек.**

Тенеялĕнчи Егор Иванович Иванов та Аслă вăрçă çулăмĕ витĕр тухнă. Вăл 1921 çулхине вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкула пĕтернĕ, унтан Сăхăтпуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта пĕр çул пĕлӳ илнĕ хыççăн ашшĕ вилнĕ пирки малалла вĕренме май килмен, çамрăклах хресчен ĕçне кӳлĕнме тивнĕ.

1941 çулхи март уйăхĕнче çирĕме те çитмен каччă салтак тумне тăхăннă. Белоруссире службăра тăнă пирки вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çапăçăва кĕнĕ. 85, 122 миллиметрлă тупăсен, 152 миллиметрлă гаубицăн авăрлакан пулса нимĕçсене хирĕç çапăçнă. Вăрçă çулĕсемпе Германие, Чехословакие çитнĕ. Çапăçусенчи паттăрлăхшăн Тăван çĕршыв вăрçин II степеньлĕ орденĕпе, «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн», «Прагăна ирĕке кăларнăшăн», «1941–1945 çулсенче Германие çĕнтернĕшĕн» медальсемпе наградăланă ăна.

Фронтран таврăнсан, колхоз ĕçне кӳлĕннĕ Егор Иванович. Малтан кладовщикре, строительство бригадин бригадирĕнче тăрăшнă. 1948 çултан пуçласа ăна фермăсен заведующине лартаççĕ. Ку ĕçре вăл 1977 çулччененех вăй хурать, пысăк пултарулăхпа, ĕçе лайăх йĕркелепипе палăрса тăрать. 1976 çулта Егор Иванов ертсе пыракан ферма коллективĕ кашни 100 гектар çĕр пуçне 137 центнер ытла аш-какай, 366 центнер сĕт туса илсе районта пĕрремĕш вырăна тухнă. Ĕнесен вăтам продуктивлăхĕ 3000 килограмран иртнĕ. Патшалăх çакна палăртмасăр хăварма пултарайман. Ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн Егор Ивановича Иванова «Чăваш Республикинчи чи лайăх ферма заведующийĕ» хисеплĕ ят парса чысланă, унтан Ленин орденĕпе наградăланă. Çак орденах 1971–1974 çулсенчи хастар ĕçшĕн Раиса Леонтьевна Васильева дояркка та тивĕçнĕ. Егор Ивановича Тăвай район Совечĕн депутатне те суйланă. Вăл производство организаторĕ пулнă май, общество ĕçĕнчен те пăрăнман.

Егор Ивановичпа унăн мăшăрĕ Анастасия Михайловна (вăл 1926-мĕш çулта çуралнă) демографи ыйтăвне те кайри плана хăварман, çичĕ ача çуратса ӳстернĕ, çак шутран тăватташĕ – арçын ачасем: Виталий (1947), Иван (1950–2016), Вениамин (1955–2014), Владимир (1961), виççĕшĕ – хĕрачасем: Мария (1953), Нина (1957) тата Ирина (1964). Кашни ачи – хăй пĕр телей.

– Тавах Турра, вĕсенчен тăваттăшĕ паян кун та сывă, тĕрĕс-тĕкел пурăнать,–терĕ Тенеялĕнчех çуралса ӳснĕ, вун тăххăрта Егор Ивановичпа Анастасия Михайловна ывăлне Вениамин Егоровича качча тухнă Альбина Сергеевна Иванова. – Мăшăрăм, Вениамин вунă çул каялла сасартăк пурнăçран уйрăлса кайнипе вара халиччен те ниепле те килĕшме пултараймастăп. Нумай çул пĕрле шăкăл-шăкăл пурăнма ĕмĕтленеттĕмĕр.

Пĕлтĕр мăшăрĕн амăшĕ Анастасия Михайловна та çĕре кĕнĕ. Телее, 97 çул пурăннă вăл. Пĕлнĕ эпĕ ăна – çав таран типтерлĕ, йĕркеллĕ, кăмăлçах хĕрарăмччĕ. Ĕмĕрне, мăшăрĕ пекех, колхозра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе ирттернĕ. Бригадăра тăрăшнă вăл, хăмла çитĕнтернĕ, хуçалăх пахчинче купăста, хăярпа помидор, кишĕр, хĕрлĕ чĕкĕнтĕр туса илнĕ. Вĕсем тухăçлă çитĕнччĕр, колхоза усă паччĕр тесе пахчаран тухма та пĕлмен: çумланă, сайралатнă, кăпкалатнă, шăварса тăнă, çу каçа тăрăшнă, начар тухăç илсе намăс курас темен. Тата кама усă сахал туса илни? Хамăршăн та, колхозшăн та усси пултăр тесе вăй хуратпăр-çке. Тенеяльсен пахчаçимĕçĕ те, хăмли те чăннипех те ăнса пулатчĕ. Çакна редакци ĕçĕпе Тенеяльне кайсан-тусан пĕрре кăна мар курса савăннă эпĕ. Ашшĕ-амăшĕ çеç мар, ачи-пăчи таран унта кĕшĕлтететчĕ, аслисене пулăшатчĕ. Колхоз транспортпа тивĕçтеретчĕ пурлăха турттарса тухма.

– Хăйĕн ачисемпе пĕрлех аннене, Анастасия Михайловнана, эпĕ те пулăшаттăм хăмла, пахчаçимĕç туса илме, йышпа ĕç ӳсĕнетчĕ. Лайăх тухăçшăн пурте пĕрле савăнаттăмăр,–аса илсе каласа парать халĕ кинĕ Альбина Сергеевна.

Анастасия Михайловна хăй те кинне килти ĕçсенче ялан пулăшнă. Пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр çăвартан пурăннăçке. Кайран, чылай ватăлсан та, кĕтӳ хирĕç хапха умне тăтăш тухатчĕ, килти ĕнине касулларан кĕтсе илетчĕ. Хам курнине çыратăп. Тепĕр чухне кинĕпе пĕрле те тухатчĕç – хăçан мĕнле. Пĕррехинче Анастасия Михайловна патне Шупашкарти «Акконд» акционерлă обществăн генеральнăй директорĕ Валерий Николаевич Иванов та чарăннăччĕ, çăмăл машинăпа иртсе пыраканскер. Чылай хушă питĕ тарават шакăлтатнăччĕ вĕсем пĕр-пĕринпе. Валерий Николаевич та тенеяльсем-çке, пĕр-пĕрне лайăх пĕлеççĕ, сума сăваççĕ, хаклаççĕ. Касулла ĕнисем хăйсем патне çитсе пынă май çеç уйрăлнăччĕ вĕсем пĕр-пĕрне ырлăх-сывлăх сунса. Анастасия Михайловна мăшăрĕ Егор Иванович чирлесе çĕре кĕнĕ хыççăн тепĕр вăтăр çул пурăннă. Килтисем пурте хисепленĕ ăна: ывăлĕпе кинĕ те, вĕсен ачисем те тата хăйĕн тăван ачисем те. Вĕсем те Шупашкартан килсех тăнă, халĕ те кас-кас килсе çӳреççĕ.

Альбина Сергеевна Вениамин Егоровича çитмĕлмĕш çулсен вĕçĕнче качча тухнă, ун чухне мăшăрĕн ашшĕ те пурăннă. Вĕсене Йăнтăрчă ял Совечĕн секретарĕ Таисия Савинова килне пырсах çырăнтарнă, çамрăк мăшăра юрату, телейпе тату пурнăç суннă. Мăшăрĕн ашшĕ те, амăшĕ те питĕ ăш-пиллĕ, кинне тарават пулни, яланах пулăшма хатĕрри савăнтарнă. «Хăтăрса тăкнине е сивĕ сăмах каланине нихăçан та илтмен эпĕ вĕсенчен. Унтан та ытла – хамăр фермăра ĕçленĕ чухне вĕсем нумай пулăшрĕç, ачасене те пăхрĕç. «Хыпăнса ан ӳкĕр, пурне те ĕлкĕретпĕр тетчĕç»,–каласа парать Альбина Сергеевна. Хăй вăл 1959 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнче çуралнă, Тенеялĕнчи пуçламăш, Йăнтăрчăри сакăр çул, Тăвайри вăтам шкулсенче вĕреннĕ. Пĕве кĕнĕренпе колхозри тĕрлĕ ĕçсене хутшăннă. Унтан фермăра ĕçлекенсем хĕре хăйсем вырăнне ĕне сума явăçтарма тытăннă. Хăй тĕллĕн 1991 çултан ĕне сума пуçланă. «Хĕр чухне килте те ĕне пулнă пирĕн, çамрăклах сума вĕреннĕ. Пытармасăр каласан, питĕ юрататăп эпĕ ĕне сума»,–йышăнать Альбина Сергеевна. Кĕçех сĕт суса илессипе районта мала тухнă вăл – 1998 çулта кашни ĕнерен 4250-шар килограмм сĕт сума пултарнăшăн ăна хрусталь фужерсем парнеленĕ. 2000 çулта вара районта пĕрремĕш вырăна тухнăшăн Хисеп грамоти тата пысăк кавир парса савăнтарнă. Чăваш Республикин Президенчĕн 2000 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнчи Указĕпе ăна «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă.

Мăшăрĕ те, Вениамин Егорович, ашшĕнчен хăнăхса юлнă фермăна тата çав енĕпех заочно майпа вĕренсе пĕлĕвне те ӳстернĕ. Егор Иванович ĕçлеме пăрахсан «Новый путь» колхоз правленийĕ ăна çирĕплетнĕ ферма заведующийĕ пулма. Йăнăшман – ферма малалла аталаннă, выльăхсен продуктивлăхĕ тата пĕтĕмĕшле продукци туса илесси çуллен ӳссе пынă. Коллектив ăста тата чунне парса ĕçлекен выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе чăмăртаннă. Сĕт лайăх суса илнĕрен ĕç укçи те ӳснĕ. Астăватăп-ха, вăл çулсенче района ертсе пынă должноçри çынсенчен пĕри çапла каланăччĕ: «Тенеяль дояркисем манран та нумайрах ĕçлесе илеççĕ»,–тенĕччĕ.

Ашшĕ пекех, нумай çул ертсе пынă Вениамин Егорович фермăна. Вунă çул каялла вара вăл хăйсен пӳрт тăррине витнĕ çĕртех тăрук аптăраса ӳкнĕ, çав самантрах пурнăçран уйрăлса кайнă. «Питех те йывăр пулчĕ çакăнпа килĕшме»,–тет халĕ мăшăрĕ. Тепĕр çултан хăй те фермăна çӳреме пăрахнă. Чи малтанах вăл Анастасия Михайловна пирки шухăшланă – текех çамрăк мар-çке, уншăн тимлесех тăмалла. Çитес вырсарникун вара Альбина Сергеевна хăй те утмăл пилĕк çул тултарать. «Апла пулин те фермăра выльăх пăхнă, дояркăра ĕçленĕ çулсем аса килсех тăраççĕ. Чунпа халĕ те унтах пек,–ăшшăн кулса илет ĕç ветеранĕ. – Фермăра пĕрле ĕçленисенчен паянхи кун Алиса Владимировна Александрова, Таисия Тимофеевна Петрова, Фекла Ильинична Андреева тата Ленин орденĕн кавалерĕ Раиса Леонтьевна Васильева пурăнать. Тĕл пулсан калаçатпăр, фермăри пурнăçа та, юлташсене те аса илетпĕр. Йывăр пулнă-и е çук – хамăр вăй хунă çулсем пĕрех асра. Вĕсем, ахăртнех, нихăçан та сĕвĕрĕлсе пĕтмеççĕ. Вĕсем – пирĕн çамрăклăхăн уйрăлми пайĕ. Нумаях пулмасть акă хăй вăхăтĕнче ялти клуб заведующийĕнче тăрăшнă Таисия Кузьминична Нестерована та аса илтĕмĕр – сентябрĕн 21-мĕшĕнче 85 çул тултарчĕ вăл. Шел, хаçат урлă паллă юбилейпе саламлама маларах ăсласа илеймерĕмĕр. Çавна питĕ тивĕçлĕ çын вăл. Хăй вăхăтĕнче ялти клубра культура пурнăçĕ вĕресе тăнă. Унăн пуçĕнче Таисия Кузьминична пулнă. Вăл йĕркеленипе эпир те, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, культура мероприятийĕсене хутшăннă».

Альбина Сергеевна Иванова ултă кĕтеслĕ çуртра пурăнать, икĕ пӳртрен тăрать вăл, пӳлĕмлĕ-пӳлĕмлĕ, кухнине кайран тунă. Картишĕнчен кĕрсен иккĕмĕш хутра çуллахи вырăн та пур. Пӳрте тулашĕнчен сарă тĕслĕ сайдингпа сăрнă, хитре курăнать. Шыв, газ, туалетпа ваннăй – пурте пур. Йăлтах хулари ансатлăх. Хапхаран кĕрсен картишĕнчех хӳме çумĕнче георгинсем хĕм сапаççĕ. Чечексем, улмуççисем, ытти çимĕç йывăççисем пур. Тюльпансем илем кӳреççĕ. Пахчаçимĕçсенчен купăста, хăяр, помидор, кабачок, сухан, ыхра çитĕнтернине пĕлтĕмĕр. Унсăр пуçне паранкă чылай туса илет. Эпир вĕсем патне çитнĕ чухне те консервлатчĕ, томат сокĕ хатĕрлетчĕ. Хăй те кăмăллать тĕрлĕ çимĕçсене, ачисене те хулана парса ярать. Ачисем тенĕрен, Вениамин Егоровичпа Альбина Сергеевна виçĕ ывăл çуратса ӳстернĕ: асли Сергей (1979 çулхи), вăталăххи Геннадий (1982), кĕçĕнни Михаил, 1987 çулхи. Вăталăххин çӳçĕ те ашшĕнни евĕр кăтра, теççĕ. Асли Анастасия Михайловна пурнăçран уйрăлса кайнă хыççăн амăшне пулăшакан кирлĕ тесе хуларан яла таврăннă, вăл амăшĕпе пĕр килте пурăнать, Тăвайне ĕçе çӳрет. Ятарлă вăтам специальност алла илнĕ. Сăмахран, вăл электрогазосварка ĕçне пултарать. Вăталăххипе кĕçĕнни тĕп хулара – Шупашкарта пурăнаççĕ. Иккĕшĕ те аслă пĕлӳ илнĕ, институт тата университет пĕтернĕ, çемьеллĕ. Альбина Сергеевнан паянхи куна пĕр мăнук та пур – хĕрача, асламăшĕшĕн темĕн тума та хатĕр, питĕ юратать ăна. Хулари ачисем амăшĕ патне тăтăшах килсе тăраççĕ, çăмăл машинăсемпе вăштах вĕçтерсе çитеççĕ. Кашнинчех амăшне пулăшма тăрăшаççĕ. Çĕр ĕçĕпе тăрмашнисĕр пуçне Альбина Сергеевна ĕне, пăру усрать, чăхчĕп, бройлерсем тытать. Выльăх-чĕрлĕх валли хĕл каçа апат нумай кирлĕ. Шăпах ачисем утă çителĕклĕ янтăласа хума пулăшаççĕ те. Вĕсем ӳркенменни амăшĕн чунне çу сĕрнĕ пек çемçетет. Аслашшĕпе асламăшĕн, ашшĕпе амăшĕн хастарлăхĕ ачисене те ăша кĕрсе вырнаçни савăнтарать ăна, ку пуянлăх ачисен ачисене те куçса пырасса шанать. Çакна та пытармасть: ял пурнăçĕ килĕшет ăна, ялта пурăнакансем те кăмăла каяççĕ, «кирлĕ пулсан, пĕр-пĕрне пулăшассинчен те пăрăнмаççĕ»,- тет Альбина Сергеевна.



Альбина Сергеевна Иванова

**Иван ГЛАДКОВ**

САНĂН ÇЫННУСЕМ, ТĂВАЙ ЕН

# Сăнĕ Хисеп хăми çинче

**Тăвайри тĕп больница поликлиникин иккĕмĕш хутĕнче Хисеп хăми çинче терапи уйрăмĕнчи Валентина Александровна Егорован сăн ўкерчĕкне асăрханах ĕнтĕ. Сывлăх сыхлавĕн пултаруллă ĕçченне пĕтĕм коллектив хисеплет. Ахальтен пысăк чыса тивĕçмен ĕнтĕ вăл. Çак уйрăмра сипленсе тухакансем те ăшшăн тав тăваççĕ ăна, ĕçри ăсталăхĕпе пĕрле ырă та ăшă чун-чĕреллĕ пулнине палăртаççĕ.**



Вăл – Комсомольски хĕрĕ. Çемьере виçĕ ачаран асли. Амăшĕ Нина Яковлевна тивĕçлĕ канăва кайиччченех шкулта ачасене вĕрентнĕ. Валентина лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пынă, медсестра пулма ĕмĕтленнĕ. Унăн та хăйсен çывăх тăванĕн ырă тĕслĕхĕпе çынсене чир-чĕртен сыватас килнĕ. Çут çанталăк та йăрăс пў-силлĕ хĕрарăма ырă кăмăлпа çепĕçлĕх, ăш пиллĕхпе чун илемĕ парнеленĕ.

Вăтам шкул пĕтерсен Канашри медицина училищине вĕренме кĕнĕ вăл. Кунтах пулас мăшăрне, фельдшерсен ушкăнĕнчи Тенеялĕн маттур каччине Виталий Егорова тĕл пулнă. Юлашки курсра туй туса пĕрлешнĕ.

1983 çулта Валентина Александровна Тăвай больницинче ĕçлеме пуçланă. Ача-пăча уйрăмĕнче сипленнĕ вăхăтра пуçласа асăрханăччĕ вăр-вар шурă халатлă ĕçчене. Унтанпа 40 çул ытла иртрĕ те. Çак хушăра миçе çынна ура çине тăратма пулăшман-ши? Наставник пулса практикăна килекен студентсене ăсталăха вĕрентмен-ши? Ырă тĕслĕхĕ Елена йăмăкне медсестра пулма хавхалантарнине те палăртса хăварас килет.

Пĕрре кăна мар çак уйрăмри медсестрасен канăççăр ĕçĕпе паллашма тивнĕ хама та. Вера Петровна Козлова ертсе пыракан терапи уйрăмĕнчи хăйсен тивĕçне тўрĕ кăмăлпа пурнăçлакан ĕçченсем туслă çемье чăмăртанă. Валентина Егорова вара вĕсенчен ĕç опычĕпе те, стажĕпе те маттуррисенчен пĕри. Паян та ĕç кунĕ пуçланиччченех çитрĕ Тенеялĕнчен. Хваттерĕ Тăвайĕнче-ха вĕсен. Ашшĕ-амăшĕн çуртне юхăнтарас мар тесе юлашки çулсенче ялта пурăнаççĕ.

... Шурă халат тăхăнса ĕçе пуçăнчĕ хĕрарăм. Кама укол тумалла, система ямалла. Анализсене пурте панă-и? Аслă çулхи кинемей хăйне канăççăр тытни пăшăрхантарчĕ. Калаçса лăплантарнă хыççăн салху сăн-сăпачĕ çуталчĕ. Çапла хăш чухне ăшă сăмахпа та пурнăçа çăмăллатма пулать. В.А.Егорова медсестра вара яланах çын хуйхине, ыратăвне ăша илсе пулăшма васкать.

«Пирĕн аннен чун ăшшийĕ пурин валли те çитет»,–йăл кулса хуравларĕ Инесса хĕрĕ те.

Мăшăрĕпе Виталий Николаевичпа икĕ ача çуратса ўстернĕ, аслă пĕлў панă. Руслан Чăваш патшалăх университетĕнче дизайнпа компьютер технологийĕн факультетĕнче вĕреннĕ хыççăн пĕр хушă кунтах инженер-программистра тăрăшнă. Халĕ хăй те икĕ ача ашшĕ ĕнтĕ. Строительство енĕпе тимлет. Инесса пиччĕшĕ пекех çак вĕренў заведенийĕнче филологи факультетĕнче пĕлў илнĕ. Шупашкарти 29-мĕш шкулта ĕçлет. Хăйĕн çемйипе хастар кукаçи-кукамая ытарайми икĕ мăнук парнеленĕ. Каникул вăхăтĕнче ача-пăча сассипе тулать ашшĕ-амăшĕн Тенеялĕнчи килĕ.

Медицина ĕçченĕсене хисеплеме, вырăна хума тытăнни савăнтарнине те пĕлтерчĕ Валентина Егорова. «Ялсенчи сиплев учрежденийĕсенчи кадрсен ыйтăвне те ăнăçлă татса пама пулăшĕ çакă. Сывлăхран хакли çук, çĕршыв мăнаçлăхне çынсем тăваççĕçке»,–палăртрĕ шухăшне медсестра.

Самантпа усă курса, Валентина Александровна пирĕн «Ял ĕçченĕ» хаçатпа та туслă пулнине каласа хăвармалла. Хаçат çырăнмасăр юлмасть. Нумаях пулмасть больницăра лифт вырнаçтарса ĕçлекенсен условийĕсене çăмăллатни çинчен ырă хыпар çитерчĕ. Професси тупăшăвĕсене, уявсене хастар хутшăнать. Ĕçне кура – хисепĕ. Тав çырăвĕсемпе Хисеп хучĕсене темиçе хутчен те тивĕçнĕ. Чи хакли уншăн – сиплев ĕçĕнчи тав сăмахĕсем.

Кил-çуртĕнче те, пахчинче те яланах тирпейлĕ-илемлĕ вĕсен. Кил хуçи хĕрарăмĕн чун киленĕвĕ – чечексем. Пўлĕмрисенчен хăшне-пĕрне çăва тухсан пахчана куçарать. Кăçал та иçĕм çырли çимĕçĕпе савăнтарнă. Виталий Николаевич те питĕ пултаруллă, ылтăн алăллă, стройкăри тĕрлĕ ĕçе пĕлекен маçтăр. «Хăйсен утарĕнчи пыл хурчĕсем пекех ĕçчен»,–теççĕ Егоровсем пирки кўршисем. Кун-çулне сывлăх сыхлавĕн хуралĕпе çыхăнтарнă мăшăрпа тăтăшах канашлаççĕ, тепĕр чухне укол тума чĕнсе илеççĕ. Çынсене пулăшассине тĕп тивĕçĕ вырăнне хураççĕ вĕсем.

Октябрĕн 13-мĕшĕнче Валентина Александровна 65 çул тултарать. Шурă халатне хывма, юратнă ĕçĕпе сывпуллашма васкамасть-ха. Апла ăна пархатарлă ĕçĕнче иксĕлми вăйхал, çирĕп сывлăх, çемьере килĕшў сунатпăр.

**Раиса ШУМОВА**

# Ĕç ветеранĕсене сума суса

**Юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче, аслă ăрурисен кунĕнче, сывлăх сыхлавĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисем 50 çынна яхăн районти тĕп больница поликлиникинчи акт залне пуçтарăнтăмăр.**




Райбольницăн тĕп врачĕ Алексей Владимирович Степанов, профсоюз комитечĕн председателĕ Анатолий Иванович Игнатьев пуçтарăннă хăнасене тав турĕç, праçник ячĕпе саламласа ырлăхсывлăх, вăрăм кун-çул сунчĕç. Малашне те çакăн пек активлă та хавхаланулла пулма чĕнсе каларĕç.

Тулли сĕтел хушшинче техĕмлĕ чейпе сăйланнă майăн асаилў çăмхи те сўтĕлсех пычĕ. Тĕрлĕрен уйрăмсенче ĕçленисем, ялсенчен килнисем тухса калаçрĕç, ĕç условийĕсем лайăхланса пынине палăртрĕç.

Эпир, Тушкил больницинче ĕçленисем, виççĕн пултăмăр уявра. Пирĕн коллектив питĕ туслă пулнă. Праçниксене, çуралнă кунсене пĕрле ирттернĕ. Профком председателĕ пулнă май кану вăхăтне усăллă ирттерме тĕрлĕ хуласене тухса çўрени те асрах. Хусана цирк курма, Чулхулана музейсемпе паллашма кайнăччĕ. Чĕмпĕр, Шупашкар, Суздаль хулисенчи паллă вырăнсене çитсе курни манăçман-ха. Совхоз директорĕ Николай Варфоломеевич Моряков транспортпа тўлевсĕр тивĕçтеретчĕ. АПК ĕçĕн хисеплĕ ветеранне паян та ăшă тав сăмахĕпе аса илетпĕр, çирĕп сывлăх, ăнăçу сунатпăр.

